27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
18
ЭРНЕКУН
162(6657) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

СТАЛИНЛА АВИАЦИ КУНĔ

Августăн 20-мĕшĕнче, вырсарникун, пирĕн Совет Союзĕнчи халăхсем Сталинла авиаци Кунне палăртаççĕ. Çĕршывăн чаплă та мухтавлă соколĕсем хăйсен праçникне кăçалхипе тăваттăмĕш хут ĕнтĕ ҫапăçу хирĕнче уявласа ирттереççĕ.

Пирĕн сталинла авиаци, хăйĕн вут-çулăмĕпе тăшманăн оборонине çапа-çапа аркатса, хăватлă наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара çул уçса парать, пехотинецсемпе танкистсене, артиллеристсене сывлăшран тăшман çăханĕсем пырса тапăнассинчен хӳтĕлет, тăшманăн тылне, çулĕсемпе çыхăнăвне аркатать. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн çĕр çинчи воинсем хăйсен сывлăшри тусĕсене пĕтĕм чун-чĕререн юратаççĕ.

Совет авиацийĕ фашистсен авиацийĕнчен пур енĕпе те малта тăрать. Пирĕн социализмлă индустри авиаци валли чи лайăх самолетсем, чи лайăх хĕçпăшал туса парать. Совет халăхĕ сывлăш вăйĕсен аслă çарне пăхса çитĕнтерчĕ, вăл паттăрсен çĕнĕрен-çĕнĕ йышне парса тăрать. Пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ хăйĕн хăюллă соколĕсене, пĕтĕм Хĕрлĕ Çарпа пĕрле, çĕнтерӳ çулне кăтартса пырать.

Этемлĕхĕн ирсĕр тăшманĕсене — фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçакан сталинла соколсен йышĕнче пирĕн чăваш халăхĕн ывăлĕсем те пур. Вĕсем пĕтĕм Хĕрлĕ Çар воинĕсемпе, чăваш халăхĕн фронтра çапăçакан мĕнпур ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле, тăван çĕршывăн чысĕпе чапне, хамăрăн орденлă республикăн ятне çӳлте тытаççĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн пирĕн земляксенчен вуншар летчика Совет Правительстви орденсемпе наградăланă, вĕсенчен чи паттăртараххисем — Ф. Орлов, Б. Васильев, М. Ефимов, М. Сапожников Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Çак паттăрсем хăйсен геройла ĕçĕпе ирсĕр тăшмана çав тери пысăк сиен кӳнĕ, халĕ те вĕсем аманнă тискер кайăка хаяррăн аркатаççĕ. Вĕсем пырса çапнă вырăнсенче тăшманăн çунса кайнă танкĕсемпе тупписен ванчăкĕсем, складсемпе оборона сооруженийĕсен ишĕлчĕкĕсем, гитлеровецсен çĕршер те пиншер виллисем выртса юлаççĕ. Сăмахран, Улатăр хулинче çуралса ӳснĕ летчик-истребитель капитан Александр Кочетов хăй кăна тăшманăн 31 самолетне çунтарса янă, пере-пере аркатнă.

Чăваш халăхĕ хăйĕн ăмăрт-кайăкĕсен ячĕсене лайăх пĕлет, мĕншĕн тесен кашни паттăрăн пурнăçĕпе ятне тăван çĕршывшăн, халăхшăн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тунă чаплă ĕçсем илемлетсе тăраççĕ. Халăхпа Хĕрлĕ Çар хушшинчи çыхăну халĕ нихăçанхинчен те ытларах пĕтĕçсе çирĕпленчĕ. Фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерес тесе малалла хăватлăн тапăнса пыракан Хĕрлĕ Çаршăн халăх нимĕн те хĕрхенсе тăмасть. Хĕрлĕ Çар валли çапăçу техники тума республикăри ĕççыннисем вăрçă пуçланнăранпа нумай миллион тенкĕ укçа пухса пачĕç. Уйрăмах хытă юратать халăх герой-вĕçевçĕсене!

Вырăс çынни—Улатăр районĕнчи «Красный луч» колхоз членĕ А. М. Сарсков юлташ чăваш халăхĕн ывăлне — Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлов майора хăй перекетленĕ 100.000 тенкĕ укçипе боевой самолет илсе панине пирĕн республикăри ĕççыннисем пурте пĕлеççĕ. Çав самолета Сарсков юлташ нумаях пулмасть Орлов майорăн аллине пачĕ.

Орлов юлташ пирĕн хаçатăн паянхи номерĕнче пичетленсе тухакан хăйĕн статьинче çапла çырать: «Манăн земляк Сарсков колхозник хăй ĕçлесе перекетленĕ укçа-тенкĕпе мана «ЛИ-2» самолет илсе парнелерĕ. Савăнса та мухтанса тытса пыратăп эпĕ çав самолетăн штурвалне, нимĕç захватчикĕсене пĕтĕм чун-чĕрери курайманлăхпа аркатса пыратăп. Халăх пирĕншĕн тăрăшни, пире, летчиксене, паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарать».

Совет Союз Геройĕн Орлов юлташăн ĕçне пысăка хурса хакласа, Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн председателĕ П. Н. Майков тата фермăсен заведующийĕ С. М. Соловьев юлташсем чаплă герой валли татах тепĕр самолет туянма иккĕшĕ 100.000 тенкĕ укçа хыврĕç. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ колхозниксем кăмăлласа ыйтнине тивĕçтерме пулса, вĕсене Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ.

Çавăн пекех çак колхозри бригадир Е. А. Смеловпа счетовод В. Н. Волков юлташсем, 50.000-шер тенкĕ хывса, пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ подполковник Б. М. Васильев валли самолет тума заказ панă.

Пăрачкав районĕнчи «Красный пахарь» колхозри М. В. Дубровин колхозник хăйĕн ывăлне С. М. Дубровин летчика самолет туянса панă.

Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ А. Гаязов, Совет Союзĕн Геройĕ Александр Кочетов валли самолет тума заказ парса, 100.000 тенкĕ укçа хывнă. Çав мухтавлă патриотсене пурне те Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунă.

Аçта, мĕнле çĕршывра курма пулать ялти хресчен çынни хăйĕн укçи-тенкипе çар валли çавăн пек самолетсем илсе панине? Кун пек чаплă ĕçсем пирĕн социализмлă çĕршывра кăна пулаççĕ. Ирĕклĕ совет çĕрĕ ирĕклĕ совет çыннине хăйĕн мĕнпур пуянлăхĕсене парать; çак çĕр çинче пархатарлă чаплă паттăрсем çитĕнеççĕ.

Пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ ертсе пыракан, пĕтĕм совет халăхĕ вăйхăват парса тăракан мухтавлă соколсем, пĕтĕм Хĕрлĕ Çарпа пĕрле пулса, Гитлерăн çарĕсене малашне те пĕр хĕрхенмесĕр аркатса пырĕç, фашистла тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерĕç, совет халăхне аслă çĕнтерӳ кӳрĕç.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Белорусси партизанĕсене Совет Союзĕн Геройĕ ятне парасси çинчен

Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшман тылĕнче кĕрешнĕ чухне правительство заданийĕсене кăтартуллăн, хастарлăн тата паттăррăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата Белоруссире партизансен юхăмне вăйлатса ярас тĕлĕшпе уйрăмах чаплă ĕçсем тунăшăн, Ленин орденĕпе «Ылттăн Çăлтăр» медаль парса, çаксене Совет Союз Геройĕн ятне парас:

1. Иосиф Александрович Бельские
2. Борис Адамович Булата
3. Андрей Иванович Волынеца
4. Дмитрий Тимофеевич Гуляева
5. Алексей Федорович Данкалова
6. Борис Михайлович Дмитриева
7. Сергей Георгиевич Жунина
8. Филипп Иванович Ковалева
9. Василий Захарович Коржа
10. Федор Яковлевич Кухарева
11. Эдуард Викторович Лавриновича
12. Петр Григорьевич Лопатина
13. Алексей Стефанович Лукашевне
14. Федор Алексеевич Малышева
15. Михаил Глебович Мармулева
16. Анна Ивановна Масловскаяна
17. Петр Миронович Машерова
18. Владимир Алексеевич Парахневича
19. Георгий Федорович Покровские
20. Николай Прокофьевич Покровские
21. Павел Минаевич Романова
22. Федор Михайлович Синичкина
23. Григорий Аркадьевич Токуева
24. Мамадали Топвалдыева
25. Евгений Федорович Филиппскихе
26. Владимир Зенонович Царюка.
27. Минай Филиппович Шмырева.

СССР Верховный Совет Призидиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 15-мĕшĕ.

Аслă шкулсенчи обществăллă наукăсен кафедрисен заведующийĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ

Августăн 14-мĕшĕнче Мускавра марксизм-ленинизм, политикăллă экономи, философи тата СССР историйĕн кафедрисен заведующийĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвĕ уçăлнă. Ăна СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕ пухнă. Канашлура 500 çын ытла, унта Совет Союзĕнчи университетсемпе институтсен кафедрисен заведующийĕсем, çĕршывăн пысăк центрĕсенчи парти организацийĕсен представителĕсем, Мускаври аслă шкулсен профессорĕсемпе преподавателĕсем.

Обществăллă наукăсене мĕнле вĕрентни çинчен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул ĕçĕсен комитечĕн председателĕ С. В. Кафтанов юлташ доклад тунă.

Канашлу темиçе куна пырать. Политикăллă экономи, философи тата СССР историйĕн ыйтăвĕсемпе теориллĕ темиçе доклад пулать. (ТАСС).

Мускава вырăс халăхĕн юррисене юрлакан 11 хор пырать

Мускава Архангельск облаçĕпе Горький облаçĕнчи хор коллективĕсем килпĕ. Вĕсем вырăс халăхĕн юррисене юрлакан хорсемпе солистсен Пĕтĕм Российăри смотрĕн юлашки концертĕнче пулаççĕ.

Мускав çыннисем пирĕн çĕршыври 11 чи лайăх хорăн пултарулăхĕпе паллашаççĕ. Çав хорсенче 1.200 çынна яхăн шутланса тăрать. Чылай хор коллективĕсене —Воронежри, Калининри, Свердловскри тата Кăнтăр Уралти хорсене — вăрçă пуçланнă хыççăн çеç тунă.

Çурçĕрти юрăсене юрлакан Архангельск облаçĕнчи хор чи ватă хор пулса тăрать.

Юлашки концертсем августăн 16-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинче Чайковский ячĕпе тăракан залра пулса иртеççĕ. (ТАСС).

Государствăна утă парассине хăвăртлатмалла

Республикăри чылай районсем государствăна утă тăратмалли плана ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Вăрмар районĕ государствăна утă памалли плана 93 процент тултарнă. Ку енĕпе Шупашкар, Красноармейски тата ытти районсем малта пыраççĕ. Анчах та Етĕрне, Чкаловски районсенчи колхозсем государствăна утă памалли обязательствăсене çуррине те тултарман. Шăмăршă районĕ вара çак вăхăта ситсе те утă çама пуçăнман.

Тырпулсене вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртни— паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшни

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕМ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТМЕЛЛИ ТАТА ЫРАШ АКМАЛЛИ ПЛАНСЕНЕ 1944 ÇУЛХИ АВГУСТĂН 15-МĔШЕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тата çурхи тырăсем вырнă	Капана хывнă	Çапнă	Кĕрхи тырăсем акнă
Чурачăк	56,4	21,1	8,5	31,4
Çĕрпӳ	54,4	22,9	17,1	24,7
Канаш	53,0	13,9	9,7	15,3
Чкаловски	52,9	23,7	16,7	20,0
Калинино	52,5	9,2	4,7	8,8
Муркаш	51,9	31,3	23,1	26,2
Шăхасан	51,6	12,8	9,7	20,1
Етĕрне	51,2	18,2	8,4	21,6
Куславкка	51,1	17,1	12,4	12,6
Красноармейски	50,5	14,1	11,1	17,8
Октябрьски	50,3	17,1	11,4	16,8
Элĕк	49,9	10,0	5,5	9,6
Вăрмар	49,9	16,3	10,4	18,7
Комсомольски	49,5	14,6	9,7	1,4
Елчĕк	49,0	13,1	7,6	23,6
Шупашкар	48,7	20,8	13,8	18,2
Сĕнтĕр	46,8	20,4	13,2	20,0
Вăрнар	46,5	21,6	18,7	25,8
Ишлей	46,3	13,2	8,7	11,9
Сĕнтĕрвăрри	46,2	17,8	10,5	15,6
Хĕрлĕ Чутай	46,0	23,6	15,7	10,2
Советски	45,4	9,6	7,1	15,1
Тăвай	43,9	11,8	9,9	13,1
Пăрачкав	42,0	29,1	14,4	12,3
Шăмăршă	41,1	18,6	10,1	10,0
Йĕпреç	39,6	25,5	15,4	9,5
Çĕмĕрле	37,3	29,6	14,0	6,0
Первомайски	34,8	11,1	10,3	11,5
Улатăр	30,6	22,7	13,4	2,9
Кувакино	22,8	20,9	9,3	4,0
Пĕтĕмпе	47,2	17,7	11,4	15,5
Августăн 10-мĕшĕ тĕлне пулнă	33,1	9,6	5,6	—

Колхозсене ялхуçалăх инвентарĕсем туса паратпăр

Красноармейски районри «Стрела» пром. артелĕ Чадукасси ялпоне колхозсене сутма çак кунсенче кăна 200 вĕрен, 400 йывăç кĕрепле, 100 юман тĕнĕл туса пачĕ. Колхозсене кирлĕ çак япаласене малалла та тăватпăр.

Г. ЕРИСОВ.
Промартель председателĕ.

Кулленхи нормăна ытлашшипех тултараççĕ

Вăрмар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз ыраша августăн 1-мĕшĕ тĕлнех, 4 кунра, вырса пĕтерчĕ. Ыраш вырнă чухне тата çуртыррисене вырнă чухне те колхозниксем ĕçе хĕвел тухиччен тухса, тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ. Кулленхи нормăна тултарайман çынсем çук та теме пулать. Уйрăм колхозницăсем кулленех икшер норма тултараççĕ. Тырăсене вырнă çĕрте тăккаланчăксем çукпа пĕрех. Пучахсене пухма шкул ачисенчен ятарласа отряд тунă, вĕсене учительсем ертсе пыраççĕ.

Колхоз ыраш акма вăхăтра тухрĕ. Çĕртме пуссине лайăх хатĕрленĕ, ик хут сухаланă, сӳреленĕ. Ыраш тата кĕрхи тулă акмалли вырăна 1750 лав тислĕк тăкнă. Колхоз кăçал 45 гектар кĕрхи тулă акать. Тулла пĕтĕмпех сеялкăпа акаççĕ. Ыраш акас ĕçре те колхозниксем кулленхи нормăна тултарса, агротехникăна пурнăçласа ĕçлеççĕ.

Л. РОДИОНОВ.

Пĕтĕм вăя—тырпулсене пухас ĕçе

СĔНТĔРВĂРРИ, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Колхозсем халĕ хĕрӳ ĕçре, кашни ĕçлеме пултаракан çын тырпул пухса илес ĕçе хутшăнмалла. Пирĕн районри учительсемпе шкул ачисем тырпулсене пухса кĕртес ĕçре колхозсене пĕтĕм вăйпа пулăшма тăрăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне колхозсен уйхирĕсенче 167 учитель тата 2.107 шкул ачи ĕçлет. Учительсем, уйра ĕçленипе пĕрлех, колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантарулă ĕçе те анлăн туса пыраççĕ, вĕсем пурте тенĕ пекех агитатор пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕçре те ытти колхозниксемпе колхозницăсенчен юлмаççĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра учительница Соколова юлташ агитатор пулса ĕçлет, çав вăхăтрах вăл кулленхи нормăна 3 хут ытла тултарать. Турханти вăтам шкулта вĕренекен Иванова юлташ та кулленхи нормăна 2 хут ирттерсе тултарать.

Кĕçĕн классенче вĕренекен ачасем пучах пухас тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Районĕпе пурĕ 21 отряд ĕçлет. Шульгино ялĕнчи 30 ачаран тăракан отряд (ăна учительница Киреева юлташ ертсе пырать) юлашки кунсенче кăна 179 килограмм пучах пухса панă.

Учительсемпе шкулта вĕренекенсем мĕнле ĕçленине вĕсен ĕçкунĕсем лайăх кăтартса параççĕ. Районри 167 учитель паянхи кун тĕлне 7.213 ĕçкунĕ, 2.107 шкул ачи 4.130 ĕçкунĕ тунă. Ахсакассинчи учитель Христофоров юлташ 112 ĕçкунĕ, Алексеев — 80 ĕçкунĕ, пуçламĕш шкулта вĕренекен Лена Агеева 36 ĕçкунĕ тунă.

А. ЕРМАКОВА,
Çутĕç пайĕн заведующийĕ.

Уйхир ĕçĕнчи стахановкăсем

СĔНТĔР, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). Ярославкăри «Первая борозда» колхозра тырă вырма тухнăранпах уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Верховный Главнокомандующине Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа «Çĕнтерӳ» орденне панипе тата Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерӳсем тунипе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем халиччен пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем ирхине шурăмпуç çутипе тытăнаççĕ те каçхине тĕттĕм пулсантин ĕçрен кĕреççĕ. Çак колхозри 1-мĕш бригадăри колхозницăсем М. Яхонина, Д. Кудряшова, К. Запольская, Е. Шатынова, А. Соколова, Е. Амурцева, К. Мигушева юлташсем, тырă вырнă çĕрте пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлесе, кулленхи нормăна 200-шер процент тултараççĕ. Вĕсенчен кашни ыраш вырнă чухне кăна 2-шер гектар ытла вырнă. Ĕç пахалăхĕ лайăх.

— Кăçал тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте кашни колхозницăна кулленех икшер çыншăн ĕçлеме чĕнетпĕр, — теççĕ çак патриоткăсем.

Тухăçлă кок-сагыз пухса илнĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, августăн 17-мĕшĕ. (Телефонпа). «Красное Батырево» колхозра чылай вăхăт хушши кок-сагыз туса илессипе ватă колхозник И. П. Илюткин юлташ ĕçлет. Вăл 61 çулта. Пĕр гектар çурă çинчи кок-сагыза Илюткин юлташ пĕтĕмпех хăй пăхса çитĕнтернĕ, кăпăшкалатнă, çумланă т. ыт. те. Колхоз планĕ тăрăх гектартан кок-сагыз вăрлăхне 23 килограмм, тымарне 10 центнер пухмалла. Илюткин юлташ кок-сагыз вăрлăхне 24 килограмм тата 11,5 центнер тымар пухса илнĕ.

М. МИРОНОВА.

РЕСПУБЛИКĂРИ РАЙОНСЕН ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАС ТĔЛĔШПЕ ПЫРАКАН

АМĂРТĂВĔ
(1944 çулхи августăн 15-мĕшĕ тĕлне илнĕ сведенисем тăрăх)

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăнать
Канаш	1
Куславкка	2
Шăхасан	3
Чурачăк	4
Çĕрпӳ	5
Красноармейски	6
Вăрмар	7
Сĕнтĕрвăрри	8
Октябрьски	9
Шупашкар	10
Тăвай	11
Сĕнтĕр	12
Етĕрне	13
Муркаш	14
Ишлей	15
Калинино	16
Çĕмĕрле	17
Елчĕк	18
Чкаловски	19
Комсомольски	20
Йĕпреç	21
Вăрнар	22
Элĕк	23
Шăмăршă	24
Хĕрлĕ Чутай	25
Улатăр	26
Советски	27
Пăрачкав	28
Кувакино	29
Первомайски	30

Государствăна тырă парса татнă

ШАХАСАН, августăн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем малтанхи чи лайăх тырра государствăна параççĕ. Тăрăнти «Красный партизан» колхоз паянхи кун тĕлне обязательнăй йĕркепе памалли плана пур культурăсем енĕпе те тултарнă. Çак колхоз государствăна аш-какай, сĕтçу тата ытти парăмсене те ыраш вырма тухиччченех парса татрĕ. Çавăн пекех «Новая жизнь» колхоз та пур культурăсем тăрăх та государство умĕнчи парăмсене татнă. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз государствăна тырă памалли плана 74 процент, Молотов ячĕпе тăракан колхоз 50 процент тултарнă. «Активист» колхоз та малтисен ретĕнче пырать.

Анчах та районри хăшпĕр колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе питĕ юлса пыраççĕ. Уйрăмăнах «Березовка», «Оборона» колхозсем кайра пыраççĕ, вĕсем тырă пама тытăнманпа пĕрех.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПЕТСЕРИ (ПЕЧОРЫ) хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — МИКИТОМЯЭ, ЯРВЕПЯ, ЛЕВИ, ВАНА КОЙОЛА, МУСТАЙЫЭ, ОСУЛА, УРВАСТЕ, КАССИ, МАДИСЕ ятлă пысăк ялсем тата ИЛУМЕТСА, ОРАВА, КУРЕНУРМЕ, ВАБИНА, АННЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

РАСЕЙНЯЙ хули районĕнче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату тӳстернĕ.

ПРАГАРАН хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă.

САНДОМИР хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ.

САНОК хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 114 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 29 самолетне персе ӳкернĕ.

АВГУСТĂН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПЕТСЕРИ (ПЕЧОРЫ) хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПАРМА, РАХУМЯЕ, КИРМСИ, ПЯАЗНА, СОХАРА, ПАРТСИ, АЛАКЮЛА, ПЫЛЬВА, МЕМАСКЮЛА, ЭРАСТВЕРЕ, СУЛБИ ятлă пысăк ялсем тата ВЕРИОРА ятлă чугун çул станцийĕ.

ШАУЛЯЙ (ШАВЛИ) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен атакисене ăнăçлăн сире-сире янă.

ПРАГАРАН хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Вăйлă çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем ОССУВ ятлă халăх пурăнакан пункта хăварнă.

САНДОМИР хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем ВИСЛА шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн ăнăçлă çапăçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ. Пирĕн çарсем САНДОМИР хулине вăркăнса кĕрсе кайнă та тăшманпа хула урамĕсенче çапăçма тытăннă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 118 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 66 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Петсери хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, вăрманлă вырăнсенче 10 километр малалла кайнă. Малалла куçса пынă май совет боецĕсен темĕн чухлĕ чăрмавсене, минăсем лартса тултарнă вырăнсене, вăрмансенчи йывăçсем купаласа пӳлнĕ вырăнсене çĕнтерсе пыма лекет. Нимĕçсем час-часах контратакăсем тăваççĕ, кашни меллĕ вырăнтах хытă хирĕç тăраççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине сире-сире ярса, 600 гитлеровецa ытла пĕтерсе тăкнă, 8 тупă, 13 миномет, 26 пулемет тата 3 боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Петсери хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем, ушах вырăнсемпе тата йышлă пĕчĕк юханшывсемпе усă курса, хытă хирĕç тăраççĕ. Совет çарĕсем, татăклăн пыра-пыра çапса, тăшмана халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Нимĕçсен оборонин узелне—Пыльва местечкăна туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухату кӳнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункт районĕнче кăна гитлеровецсен 260 виллине шута илнĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Шауляй (Шавли) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тăшман пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн совет пехоти, артиллери пулăшнипе, нимĕçсене малтанхи позицисем çине хăваласа янă. 250 гитлеровецa пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 6 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра тăшман совет çарĕсем уйччен çеç туртса илнĕ лайăх позицисене каялла тытса илме хăтланнă. Гитлеровецсем пилĕк хутчен контратака тунă, анчах та вĕсен атакисем ăнăçлă пулман. Пирĕн позицисем патне пымалли вырăнсенче тăшман виллисем нумай выртса юлнă тата нимĕçсен çунса кайнă 3 танкĕ тăрса юлнă. Пирĕн разведка тăвакан отряд тăшманăн 100 çынтан тăракан ушкăнне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Висла шывĕн сылтăм хĕрринче Варшавăпа юнашар ларакан Прагăран хĕвелтухăçнерехре тăшман паян ирхине çĕнĕрен атакăсем пуçласа янă. Пĕр участокра пирĕн позицисем патнелле нимĕçсен 60 йывăр танкĕ пынă. Совет артиллерийĕ гитлеровецсене сывăхах янă та вăйлăн пеме тытăннă. Самаях пысăк çухату тӳснĕ хыççăн тăшман каялла чакнă. Пирĕн мала тухса вырнаçнă пулеметсем нимĕçсен танксем хыççăн пыракан пехотине пысăк çухату кӳнĕ. Çĕнĕ резервсем илсе пынă хыççăн нимĕçсем часах çĕнĕрен атака пуçласа янă. Кунĕ-кунĕпех хаяр çапăçусем пынă. Темĕн чухлĕ çухату тӳснĕ хыççăн тăшман пирĕн чаçсене каштах каялла хĕснĕ. Оссув ятлă халăх пурăнакан пункта туртса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх. нимĕçсен 30 танкне çити, хăй тĕллĕн çӳрекен 7 туппине, 11 бронетранспортерне тата 4 бронемашинине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă.

* * *

Сандомир хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах Висла шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшман урса кайнă пекех хирĕç тăрать. Кашни ялшăн, кашни çӳллĕ вырăншăн хаяр çапăçусем пыраççĕ. Советсен танковăй тата пехотнăй чаçĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе янă та Сандомир хули урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн штурмлакан отрядсем тăшмана çуртсенчен, подвалсенчен тата дотсенчен хĕсе-хĕсе кăлараççĕ. Нимĕçсен 15 танкне, 5 бронетранспортерне тата 9 туппине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшман хăйĕн 150 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине контратакăна кĕртсе янă. Пирĕн танкистсем тата артиллеристсемпе пехотинецсем гитлеровецсене хăватлă вут-хĕмпе çунтарма тытăннă, нимĕçсен ирĕксĕрех малтанхи позицисем çине каялла чакма лекнĕ. Нимĕçсен 30 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине, 20 бронетранспортерне тата 30 хир туппине пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнĕ нимĕçсем çапла калаççĕ: нимĕçсен 16-мĕш танковăй дивизийĕнчи 79-мĕш мотострелковăй полкра темиçе кун хушшинче полкри çынсен 70 процентне çити вилсе е аманса пĕтнĕ, теççĕ.

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем кăçалхи июлĕн 13-мĕшĕпе августăн 12-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра нимĕçсем тӳснĕ çухатусем тата пирĕн çарсем тытса илнĕ трофейсем

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем, Совет Союзĕн Маршалĕ Конев командир пулса ертсе пынипе, кăçалхи июлĕн 13-мĕшĕпе августăн 12-мĕшĕ хушшинче наступлени тунă вăхăтра тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çакăн пек çухатусем тӳстернĕ:

ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ: самолетсем — 567, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 1.404, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—1.220, минометсем—1.230, пулеметсем—2.100, бронемашинăсем — 80, бронетранспортерсем—190, автомашинăсем—1.350, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—1.000. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 140.000 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

Çав вăхăт хушшинче Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем ТЫТСА ИЛНĔ: самолетсем — 120, танксем—567, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—2.395, минометсем—2.638, пулеметсем — 3.635, бронемашинăсем—39, бронетранспортерсем —277, автомашинăсем—10.377, паровозсем —41, вагонсем—1.286, чугун çул эшелонĕсем—28, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем — 7.019, лашасем—12.060, боеприпас, хĕçпăшал, снаряжени тата апат-çимĕç склачĕсем—190.

Нимĕçсен 32.360 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Çапла вара, Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем пĕр уйăх хушши пынă наступленире тăшманăн Львов хули енчи группировкине аркатса тăкса тата Совет Украинин Львов, Станислав, Дрогобыч, Стрый, Борислав, Самбор тата Рава-Русская хулисене туртса илнĕ, нимĕçсен çар техникин чи кирлĕ хатĕрĕсене тата çар çыннисене пĕтĕмпе çакăн чухлĕ пĕтерчĕ: тыткăна лекнисемпе вилнисен шучĕ—172.360 çын, самолетсем—687, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем — 1.941, тĕрлĕ калибрлă тупăсем—3.615, минометсем—3.868, пулеметсем—5.735, автомашинăсем—11.727.

СОВИНФОРМБЮРО.

Сталинла авиаци Тăван çĕршывăн çапăçнă çĕрте

Авиаци генерал-лейтенанчĕ
Н. ЖУРАВЛЕВ

Сталинла авиаци кунне совет халăхĕ [illegible] калама çук пысăк çитĕ[illegible]сенче кĕтсе илет. Совет Союзĕн Германи фронтĕнче йывăр [illegible] пула, гитлерла Германи [illegible] политика тĕлĕшĕнчен [illegible] пĕтес патнех пырса [illegible].

Совет авиацийĕ — Хĕрлĕ Çарăн тĕп [illegible] пĕри пулса тăрать. [illegible] машинине пыра-пыра [illegible] вырăн йышăнса тăчĕ. «Кам сывлăшра вăйлă—вăл пур енчен те [illegible]» тенине пирĕн пĕтĕмпех тĕрĕсе кăларчĕ. [illegible] сывлăшра пуç пулса [illegible] — пирĕн стратеги [illegible] пулнă.

[illegible] çул ытла фашистла [illegible] пĕр пĕччен çапăçнă. [illegible] пулнă. Анчах çак [illegible] çĕнтертĕмĕр, нимĕçсен [illegible] çапнине тӳссе ирт[illegible] эпир ăна тата саплайми [illegible].

Вăрçă пуçланнăранпа виçĕ çул хушшинче [illegible] 60.000 самолечĕ пĕт[illegible] 80 процентне пирĕн [illegible]. Нимĕçсен пĕтер[illegible] 50 проценчĕ ытла [illegible]. Çав вăхăт хуш[illegible] тата самолетсе[illegible] 120 пин çыннине [illegible] нимĕç авиаци[illegible] чакарчĕç. 1944 çулта ни[illegible] 1942-мĕш çултинчен [illegible] вĕссе тухаççĕ.

[illegible] пирĕн авиаци Хĕрлĕ [illegible] сарас ĕçре хӳтĕлесе [illegible] промышленность[illegible] куçарма активлăн [illegible] чи паха промышлен[illegible] çулйĕрсене сыхланă.

Вăрçăн малтанхи тапхă[illegible] тылĕнчи вăрçă [illegible] бомбăсем пă[illegible] Кенигсберга, Мемеле, [illegible] промышленноçпа стратеги [illegible] тăракан ытти пунктсене [illegible] фашистсене пысăк си[illegible].

Хĕрлĕ Çара Гитлерăн [illegible] ирттермелли вăрçă [illegible] лартма пулăшрĕ.

[illegible] тăрассишĕн кĕреш[illegible] калама çук пысăк çитĕ[illegible] командованийĕ, ăста [illegible] самолечĕсем пи[illegible] пулнă вăхăтра та чи [illegible] тăшманăннинчен ытла [illegible] пуха-пуха тăратрĕ. Пирĕн [illegible] нимĕçсеннинчен [illegible] паха пулса тăчĕ. [illegible] тăрассишĕн пынă кĕ[illegible] летчиксем тытса пачĕç. [illegible] лайăх летчикĕсен) пат[illegible] нумай тĕслĕхсем [illegible].

[illegible] çапăçура хăрама пĕл[illegible] пĕр шухăш çеç: [illegible] çапламалла, тăшмана ки[illegible] пĕтерсе тăкмалла. Тăш[illegible] пулсан та, вĕсем [illegible]. Горобец лейте[illegible] истребительне хăва[illegible] хăйĕн ушкăнĕнчен пă[illegible] Хăй аэродромне таврăн[illegible] «Юнкерс—87» [illegible] 20 бомбардиров[illegible] пирĕн çарсем çине [illegible] пынă пулнă. Лей[illegible] «юнкерсене» хăюллăн атакă[illegible] 9-ăшне персе ӳкернĕ, [illegible] çаврăнса тарнă.

[illegible] нимĕç летчикĕсемпе [illegible] асĕ йышши летчик[illegible]. Вĕсем — нимрен хă[illegible] çапăçма питĕ лайăх [illegible] çав тери ăста тытса [illegible]. Пирĕн ассем нумайĕ[illegible] сехрине хăпартаççĕ. [illegible] полковникĕ Покрыш[illegible] нимĕç самолетне персе [illegible].

[illegible] пысăк ăсталăхне, пат[illegible], хăюлăхне пула. [illegible] летчикĕсем халь пи[illegible] вĕссе килме хăраççĕ. [illegible] урсанах, вĕсем хăвăрт [illegible] те тараççĕ. Сывлăшра [illegible] кĕрешнĕ çĕрте са[illegible] хисепĕ те чылай пы[illegible] тăнă, халĕ те вĕсем чылай пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Авиаци промышленноçĕнчи конструкторсем, рабочисем, инженерсемпе техниксем тăрăшнипе, пирĕн чи лайăх йышши самолетсем çителĕклĕ таранах туса хатĕрленĕ. Пирĕн «Яковлев» тата «Лавочкин» йышши истребительсем нимĕçсен «Мессершмитт» тата «Фокке-Вульф» йышши истребителĕсенчен хăвăртрах вĕçеççĕ тата вĕсенчен çӳлерех вĕçсе хăпараççĕ. Пирĕн «Петляков» йышши бомбардировщиксем нимĕçсен кирек мĕнле бомбардировщикĕсенчен те ирттереççĕ, «Ильюшин» йышши штурмовиксем пек лайăх штурмовиксем вара тĕнчипе те урăх çук.

Çак мĕнпур факторсене пула, совет авиацийĕ 1943 çултах чи кирлĕ вырăнсенче сывлăшра пуç пулса тăнă, тăшманăн сывлăшри вăйĕсене калама çук пысăк сиен кӳнĕ. Кăçал пирĕн авиаци нимĕçсеннинчен тата вăйлăрах пулса тăчĕ.

Сывлăшра пуç пулса тăрассишĕн кĕрешнипе пĕрлех, совет авиацийĕ тата çĕр çинчи çапăçусене те тӳрремĕнех хутшăнса кĕрешет. Вăл тăшманăн çĕр çинчи чаçĕсене аркатмаллах пыра-пыра çапрĕ. Çавăн пек пыра-пыра çапса, вăл уйрăм çапăçусене тата пĕтĕм операцисене те хамăр майлă татса пачĕ.

1941 çулта Смоленск енче пирĕн авиаци Германин 39-мĕш танковăй корпусне аркатса тăкрĕ. Çакна пула Хĕрлĕ Çар Смоленска хӳтĕлеме хатĕрленсе çитме тата тăшмана Мускав патне кайма нумайччен чарса тăма пултарчĕ. 1942 çулта çулла Сталинград енче пирĕн сывлăшри разведка тăшманăн бронетанковăй çарĕсен пысăк вăйĕсем урăх еннелле кайма пуçланине вăхăтра сисрĕ. Тăшман Дон кукри патнелле, Сталинград еннелле кайма пуçланă иккен. Сталинград патне кирлĕ вăйсем çителĕклĕ таран илсе пыма май пултăр тесе, тăшмана кирек мĕн пулсан та тытса чармалла пулнă, тытса чараймасан та унăн наступлени хăвăртлăхне чакармалла пулнă. Çак ĕçе авиацие хушрĕç. Авиаци вара ăна ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Сталинградшăн çапăçнă чухне нимĕçсем «Яковлев-1» йышши çĕнĕ истребительсен пĕтĕм хăватне тӳссе курчĕç. Совет Союзĕн Геройĕ Клещев юлташ ертсе пыракан сталинла паттăр соколсен полкĕ Дон шывĕн кукринчи пĕр каççа çав самолетсемпе хӳтĕленĕ чухне пĕр кун хушшинче тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ, хăйĕн пĕр самолечĕ те пĕтмен.

Комсомолецăн Виктор Рогальский летчикăн, çак чаплă Геройăн таса сăнарне пирĕн халăх нихăçан та манас çук. Виктор Рогальский, халлапри евĕрлĕ Гастелло капитан пек, хăйĕн персе çĕмĕрнĕ самолетне тăшман çине ӳкернĕ. Çав кун Рогальский комсомолец нимĕçсен Сталинград тулашĕпе куçса пыракан танкĕсене икĕ хутчен кайса штурмланă. Виççĕмĕш хут вĕçсе кайсан, тăшман снарячĕ унăн самолет моторне лекнĕ. Самолета çулăм хыпса илнĕ. Çăлăнма пĕр май çеç тăрса юлнă — парашютпа сикесси. Анчах герой-комсомолец тăшмана парăнасшăн пулман, вăл вилме хапăл тунă. Вăл хăйĕн çунакан самолетне тăшманăн йышлă танкĕсем çине ӳкернĕ, тăшмана питĕ пысăк сиен кӳнĕ, броньăланă тискер машинăсен çапăçури йĕркине арпаштарса янă.

Сталинградшăн çапăçнă чухне авиаци пирĕн çарсене çав герой-хулана сыхласа хăварма пулăшрĕ. Пирĕн çарсем татаклă наступлени пуçласа ярсан, авиаци нимĕç оборонине ватакан хăватлă мăлатук вырăнне пулса тăчĕ. Нимĕçсене Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ хыççăн пирĕн авиаци Сталинград «хуранне» сывлăшран çирĕп питĕрсе хучĕ.

Хĕрлĕ Çар 1943 çулхи июль уйăхĕнче «Курск пĕкки» ăшĕнче оборонăра тăрса çапăçнă вăхăтра та совет авиацийĕ, çĕр çинчи çарсемпе таччăн çыхăнса кĕрешсе, татăклă çитĕнӳсем турĕ. Пирĕн самолетсем сывлăшри тăшман самолечĕсене çеç аркатман, вĕсем тата тăшманăн çĕр çинчи «тигрĕсемпе» «фердинанчĕсене» те пĕтерсе пычĕç, ăна пысăк сиен турĕç.

Çав çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен танкĕсене мĕн тери вăйлă та ăнăçлăн пыра-пыра çапнине ак çакăнтан та лайăх курма пулать: Поныри районĕнче нимĕçсен 9-мĕш танковăй дивизийĕ наступлени тума хатĕрленсе тăнă пулнă. Анчах хăй атакăлама пуçличчен 20 минута малтан ăна пирĕн штурмлакан авиацин пысăк вăйĕсем атакăланă. Нимĕçсенне 70 танкне çити çунтарса янă, ыттисем вара, пĕтесрен хăраса, тĕрлĕ çĕрелле тарса саланнă. Çапла вара тăшман танкĕсен пысăк атакине путлантарса лартнă.

Хĕрлĕ Çар татăклăн наступлени тума пуçласан, нимĕçсене хĕвеланăçнелле хăвалама тытăнсан, пирĕн авиаци, вăйлă пыра-пыра çапса, совет çарĕсене тăшмана çĕнтерме пулăшса пычĕ. Вăл тăшман артиллерийĕпе миномечĕсене пусарса, танкĕсемпе çыннисене аркатса, резерври çарĕсене йĕркерен кăларса пычĕ.

Крымра та пирĕн çарсем совет авиацийĕ активлăн пулăшнипе çĕнтерчĕç. Карели перешеекĕнче те пирĕн летчиксем пехотăпа танксене тăшмана çапса аркатма пулăшса пычĕç. Вĕсем Витебск патĕнчи çапăçусенче те татăклă вырăн йышăнчĕç.

Хĕрлĕ Çар авиацийĕн хăвачĕпе ăнăçăвĕсем пирĕн совет государстви вăйлăн аталанса пынипе пула çитĕнсе çитнĕ. Пирĕн авиацин хăвачĕпе ăнăçăвĕсенче — пирĕн халăх хăйне хăй шеллемесĕр ĕçлени, унăн пултарулăхĕ, большевиксен партийĕн организацилекен вăйĕ, пирĕн аслă çулпуçă полководецăн Сталин юлташăн çав тери пысăк ăсĕ курăнать.

Пĕрремĕш пятилеткăн итогĕсене пăхса тухнă чухне Сталин юлташ çапла каларĕ: «Пирĕн авиаци промышленноçĕ пулман. Халĕ вăл пирĕн пур ĕнтĕ». терĕ. Ун хыççăнхи çулсенче çав промышленность ӳссе, çирĕпленсе пычĕ. Унăн кадрĕсем опыт туянса, хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерсе пычĕç. Совет ученăйĕсен пултаруллă шухăшĕсем Яковлевăн, Лавочкинăн, Ильюшинăн, Петляковăн, Поликарповăн, Микулинăн, Климовăн, Швецовăн тата ыттисен те калама çук лайăх самолечĕсенче пурнăçа кĕчĕç.

1941 çулта авиаци промышленноçĕн работникĕсем тĕлĕнмелле паттăр ĕç турĕç: вĕсем хăйсен заводĕсене инçетри тыла хăвăрт та кăтартуллăн куçарса кайрĕç те унта вĕсене калама çук кĕске срокра хута ячĕç. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн промышленность сыхланса юлчĕ çеç мар, вăл тата питĕ нумай ӳсрĕ, вăл фронта чи лайăх йышши боевой самолетсем çителĕклĕ таранах парса тăма пултарчĕ.

Совет халăхĕ хăйĕн сывлăшри вăйĕсемшĕн уйрăмах хытă тăрăшать. Çакна самолетсем тума укçа пухни те питĕ лайăх кăтартса парать. Ферапонт Головатый пуçарнипе, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем самолетсем тума хăйсен перекетлесе хăварнă укçине хыврĕç. Çав укçапа тунă темиçе пин самолет халь Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче кĕрешеççĕ.

Пирĕн авиаци çыннисен çапăçури паха ĕçĕсене Совет правительстви пысăка хурса хакларĕ. Вăрçă пуçланнăранпа 60.000 çынна яхăн орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. 700 çынна ытла Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Чи лайăх 13 летчика — Покрышкина, Дмитрий Глинкăна, Покрышева, Бондаренкăна, Речкалова, Алелюхина, Луганские, Камозина, Ефремова, Лавриненкова, Зайцева, Гуляева тата Голубева — Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут панă.

Сывлăшра пуçарулăха хăйсен аллинче çирĕп тытса тăрса, совет летчикĕсем çĕр çинчи çарсене тăшман авиацийĕн атакисенчен сыхлаççĕ, тупăсемпе персе, артиллерин вут-хĕмне ӳстереççĕ, танксене маневрсем тума пулăшаççĕ, пехотăна çул уçса параççĕ. Пирĕн сталинла соколсем тăшман тылĕнче ăнăçлăн кĕрешеççĕ, тăшманăн резервĕсене тата-тата илеççĕ, унăн техникине пĕтерсе тăкаççĕ, çулйĕрĕсене пăсаççĕ, анлă фронтра инçене кайса разведка тăваççĕ. Совет авиацийĕ пур çĕре те пырса çитекен авиаци пулса тăчĕ.

Пирĕн гражданла авиаци те ответлă заданисене ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Вăл фронта паха грузсем илсе пырать, фронтран аманнисене илсе тухать. Летчиксем тăшман тылне, партизансем патне вĕçе-вĕçе каяççĕ, вĕсене хĕçпăшал, боеприпас, горючи, апат-çимĕç илсе пырса параççĕ. Транспортпа пассажир авиацийĕ васкавлăн çитермелли грузсене йышлăн илсе çитерет. Ирĕке кăларнă районсемпе çыхăну тытма пуçлас ĕçре вăл чи малта тăрать. Гражданла флотăн летчикĕсем чи инçетри Çурçĕрĕн районĕсемпе çыхăну тытаççĕ, вăрмансене сыхлаççĕ, тырпулсене сиен тăвакансемпе кĕрешеççĕ.

Вăрçă вĕçленсе пырать, анчах та вăл пĕтмен-ха, тăшман хаяррăн хирĕç тăрать-ха. Тăшмана татăклăнах çĕнтермешкĕн фронтра та, тылра та темиçе хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле. Авиаци промышленноçĕнчи рабочисен, инженерсен, конструкторсен фронта лайăх йышши самолетсем тата вĕсем валли хĕçпăшалпа боеприпас ытларах туса памалла.

Тăшмана хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлеретпĕр

Фашизма хирĕç пыракан хаяр вăрçăра сталинла авиацин летчикĕсем паттăрлăхпа хăюлăхăн, хастарлăхпа ăсталăхăн çав тери чаплă тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Çĕршывăн мухтавлă соколĕсем нимĕнле йывăрлăх умĕнче те чарăнса тăмаççĕ, нимĕнрен те хăрамаççĕ. Темиçе вуншар пин летчика Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăлани, темиçе çĕршер паттăра Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани пирĕн сывлăшçар вăйĕсенчи массăллă геройлăха кăтартса параççĕ.

Гитлерла Германи пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăнсанах, Геббельс пропаганди мухтаса пĕтернĕ нимĕç летчикĕсем пĕтĕм тĕнче илтĕнмелле, намăса пĕлмесĕр, сĕмсĕррĕн çапла кăшкăрса çуйăхатчĕç: «Сывлăшри çапăçу — вăрçăн нимĕçле форми пулса тăрать, авиаци мĕн иккенне арицесем кăна ăнланаççĕ», тетчĕç. Çав ухмахла сӳпĕлтетӳ, Германи çарне çĕнтерекенни никам та çук текен халлап пекех, çилпе вĕссе кайрĕ. Геройла Хĕрлĕ Çар, Сталин вĕрентсе çитĕнтернĕ летчиксем çав ухмахла халлапсене вĕсене саракансемпе пĕрлех Мускавпа Сталинград патĕнче, Орелпа Курск патĕнче, Днепр шывĕ урлă каçнă чухне тата историллĕ çапăçусен ытти нумай тĕрлĕ участокĕсенче çăва шăтăкне персе чикрĕç. Нимĕçсен нумай «асĕсем» пирĕн çĕр çинче хăйсем валли масар тупрĕç.

Пирĕн летчиксем вăрçăн хаяр вут-çулăмĕнче пиçĕхсе тĕрекленчĕç. Вĕсем сывлăшри çапăçăвăн çĕнĕ формисене кăтартса пачĕç. Совет Союзĕн Геройĕ кĕçĕн лейтенант Талалихин, ĕлĕкхи вырăс летчикĕн П. Н. Нестеровăн примерĕпе, Мускав патĕнче нимĕç самолетне малтанхи хут хăйĕн самолечĕпе пырса çапса персе антарнă. Ун хыççăн сывлăшри фашистла вăрă-хурахсемпе кĕрешмелли çав хăватлă меслетпе çĕршер те пиншер летчиксем усă курма тытăнчĕç.

Çĕршывăн чаплă летчикĕ Совет Союзĕн Геройĕ Гастелло капитан, манăн учитель тата чи çывăх тус, хăйĕн çунакан самолетне тăшманăн горючи турттарса пыракан машинисемпе танкĕсен колонни çине янă. Тăван çĕршыва юратса, ăна çĕнтерӳ кӳрес тесе, вăл хăйĕн пурнăçне те хĕрхенсе тăмарĕ. Вăл, хăй пĕтсе, тăшманăн нумай машинисемпе танкĕсене тата темиçе çĕр нимĕçе пĕтерсе тăкрĕ. Икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ Молодчий майор, нимĕнле начар çанталăка пăхмасăр, хăйĕн самолечĕпе Берлин, Кенигсберг, Плоешти, Бухарест хулисем çине тата гитлерла вăрă-хурахсен ытти чылай йăвисем çине вĕссе кайса, вĕсене хаярран аркатнă. Ленинград çыннисен юратнă летчикĕ Жидов капитан сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 27 самолетне персе ӳкернĕ. Икĕ хутчен Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ Покрышев хăй пĕччен тата юлташĕсемпе пĕрле 29 самолет пĕтерсе тăкнă. Кун пек тĕслĕхсене вĕçĕ-хĕррисĕр кăтартма пулать. Çапла ĕнтĕ çĕршер те пиншер совет летчикĕ тĕнче халиччен курман паттăрлăх кăтартаççĕ.

Халĕ Балтика тăрăхĕнчи, Хĕвелтухăç Пруссири, Польшăри, Румынири сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем геройла ĕçсене малалла ӳстерсе пыраççĕ, хăйсен гварди ялавĕсен чапне татах та çӳлерех çĕклеççĕ.

Вăрçă çулĕсенче пирĕн авиаконструкторсем пире çĕнĕрен те çĕнĕ йышши тата чи лайăх самолетсем туса пачĕç. Совет самолечĕсем хăйсен пахалăхĕпе нимĕç самолечĕсенчен нумай малта тăраççĕ. Чаплă конструкторсем — Социализмлă Ĕç Геройĕсем Ильюшин, Лавочкин, Яковлев, Петляков тата ыттисем туса панă чаплă машинăсем нимĕç летчикĕсемпе нимĕçсен çĕр çинчи çарĕсен сехрисене хăпартаççĕ. Ильюшинăн «Сывлăш танкĕсем» тăшман пехотипе танкĕсем урлă, вĕсене çĕрпе танаштарса хаяр çил-тăвăл пек кĕрлесе иртеççĕ. Пирĕн «ПЕ-2» йышши тата «ИЛ-4» йышши бомбардировщиксем нимĕçсен «юнкерсĕсемпе» «хейнкелĕсенчен» нумай хăвăртрах та хăватлăнрах вĕçеççĕ. Пирĕн «Яковлев» тата «Лавочкин» ятлă истребительсем «мессершмиттсенчен» нумай çаврăнăçуллăрах тата вĕсенчен чылай хăвăртрах вĕçеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн халăхăн авиацири ăслăлăхĕ кая юлса пымасть. Рим поэчĕ Овиди хăйĕн «Метаморфозы» ятлă кĕнекинче çырса кăтартнă Дедальпе унăн ывăлĕ Икар çуначĕсенчен, Леонардо да Винчи чертежĕсенчен, XI-мĕш ĕмĕрте Мальмоберийски монастырĕн башни çинчен сикнĕ Оливье манахран, американецсенчен — Райт пĕртăвансенчен, «Илья Муромец» самолета шухăшласа кăларакан вырăс конструкторĕнчен Сикорскирен пуçласа, пирĕн ученăйсем юмахри пек аслă утăмсем турĕç, вĕсем самолетсене халлапсенчи пек хăвăрт вĕçекен çунатсем пачĕç. Пирĕн çĕршывра ученăйсен ăсĕпе вĕçевçĕсен практики таччăн çыхăнса тăрать, çак тăванла çыхăну вара тĕлĕнмелле машинăсем шухăшласа кăларма май парать.

Пирĕн самолетсем çапла ĕнтĕ тăшманăн самолечĕсенчен çӳлерех те инçерех, хăвăртрах та хăватлăнрах вĕçеççĕ. Çавăн пек самолетсене пирĕн çынсем кăна туса пама пултараççĕ. Кунне-çĕрне пăхмасăр, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, нумай тĕрлĕ йывăрлăхсене çĕнтерсе, нумай заводсене Хĕвелтухăçнелле куçарса кайса, пирĕн халăх самолетсемпе моторсем туса кăларас ĕçре пысăк çитĕнӳсем турĕ. Авиацишĕн халăх пĕтĕм чунне парса тăрăшнине эпир, летчиксем, нихăçан та манмăпăр.

Чаплă колхозник Ферапонт Головатый пуçарнă патриотла ĕç совет халăхĕ хушшинче питĕ хăвăрт та анлăн сарăлчĕ. Колхозниксемпе рабочисен укçи-тенкипе тунă самолетсен çĕнĕрен-çĕнĕ эскадрильисемпе полкĕсем çапăçăва кĕрсе пыраççĕ.

Манăн тăван республикăри колхозниксем те çак патриотла аслă пуçарăва хастарлăн хутшăнчĕç. Манăн земляк А. М. Сарсков колхозник хăй ĕçлесе перекетленĕ укçатенкĕпе мана «ЛИ-2» йышши самолет илсе пачĕ. Эпĕ унăн штурвальне саванса та мухтанса тытса пыратăп, эпĕ унпала нимĕç захватчикĕсене чĕрери хаяр курайманлăхпа çапа-çапа аркататăп. Халăх пирĕншĕн тăрăшни летчиксене паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарать.

Пирĕн летчиксен гитлерла вăрă-хурахсене тавăрмалли уйрăм шут пур. Ирĕке тухнă совет çĕрĕ çинче, халĕ фашистсен пусмăрĕ айĕнче асапланакан çĕрсем тĕлĕнче вĕçсе çӳресе, эпир фашистсен мĕнпур тискер ĕçĕсене, вĕсем аркатса пĕтернĕ хуласемпе ялсене куратпăр. Эпир Сталинградпа Воронеж, Ленинградпа ытти хуласен ишĕлчĕкĕсене асра тытатпăр. Германири чуралăха хăваласа кайнă совет çыннисем йынăшнине эпир илтетпĕр. Эпир хамăрăн тăвансен куççулĕсене, тыткăна лекнĕ совет çыннисене, ватă çынсемпе хĕрарăмсен тата ачасен юнĕсене куратпăр. Çаксем пурте пире тăшмана хаяррăн тавăрма, ăна хăвăртрах пĕтерсе тăкма чĕнеççĕ. Вырăс поэчĕ Брюсов хăй вăхăтĕнче çапла çырнă:

Не в грозный бой под облаками
Они, спеша, стремят полет,
Но, в полночь, тайными врагами
Над женщинами и стариками
Свергают свой огонь с высот.

Çак сăмахсем паянхи нимĕç летчикĕсем çинчен каланă пекех илтĕнеççĕ. Часах эпир çутçанталăк тӳпине, тĕнчен çутă хĕвелĕпе йăлтăртатса тăракан сывлăшне çав вăрă-хурахсенчен йăлтах тасатса çитерĕпĕр.

Пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ пире, Хĕрлĕ Çар воинĕсене, совет çĕрне фашистла ирсĕрсенчен тасатса çитерме, аманнă тискер кайăка хăйĕн шăтăкĕнчех çапса вĕлерме хушрĕ. Вăрçă Германи чиккисем патне çывхарса çитрĕ. Тăшман, ирсĕр çĕлен пек, хăйĕн йăвинелле шăвать. Анчах вăл хаяр тавăруран ниçта та тарса хăтăлаймĕ. Пирĕн çарсем, тăшмана çавăра-çавăра илсе, ушкăнăн-ушкăнăн пĕтере-пĕтере тăкса, утăм хыççăн утăм Берлин патнелле пыраççĕ.

Пирĕн авиаципе çĕр çинчи çарсем аслă çĕнтерӳсем турĕç. Анчах пире аслă Сталин — çитĕнӳсемпе каппаймалла мар, тăшман, хăйĕн вилĕмне туйнипе урса кайнăскер, вилес умĕн татах та тискеррĕнрех хирĕç тăрса çапăçассине манмалла мар, тесе вĕрентет. Çавăнпа та ĕнтĕ пĕтĕм совет халăхĕн фронтра та, тылра та тата ытларах вăй хурса ĕçлемелле. Пирĕн совет летчикĕсемпе пирĕн союзниксен летчикĕсем тата çĕр çинчи çарсем пĕр хăватлă чăмăр пулса, Гитлерăн вăрă-хурахла ушкăнне истори çулĕ çинчен çапса сирпĕтес кун инçе мар ĕнтĕ. Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе чапĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн эпир малалла—аслă çĕнтерӳ патнелле пыратпăр.

Майор Ф. ОРЛОВ,
Совет Союзĕн Геройĕ.

ÇАПАÇУРИ ÇАР.

Кăнтăр Францире союзниксен çарĕсене антарни çинчен тĕплĕнтерех пĕлтерни

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Римран çапла пĕлтерет: вăрçă мĕнле пыни çинчен çыракан çынсен шухăшĕпе, нимĕçсен Кăнтăр Францире сахал тесен 4 дивизи, нумай тесен 7 дивизи пур, танксем йышлă мар, авиаци вăйĕсем питĕ сахал.

Çав корреспондент каланă тăрăх, союзниксен çарĕсене Кăнтăр Францие антарас ĕçе союзниксен тĕрлĕ йышши 800 карапĕ хутшăннă, унта Америкăн, Англин, Францин, Канадăн, Голландин тата ыттисен карапĕсем те пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Радио саракан Колумби компанин десант антаракан судно çинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: десантсене Кăнтăр Францие суднăсен виçĕ караванĕпе илсе пырса антарнă, çав каравансем августăн 15-мĕшĕнче ирхине ирех пĕрлешнĕ. Çав суднăсем вĕсем Италири, Африкăри тата Вăтаçĕр тинĕсри нумай портсенчен тухнă. Десант антарас ĕçе хутшăннă транспорт самолечĕсене тăшман истребителĕсем хирĕç тăман.

Кăнтăр Францире союзниксен çарĕсем аннă районри лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Кăнтăр Францире çарсем антарас ĕç Нормандире çарсем антарнă ĕçрен анлăрах пулнă.

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ Браун çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем çыран хĕрринчи сарлака фронтра темиçе тĕлте аннă. Союзниксен çарĕсем анакан территори Ницца хулипе Марсель хули хушшин чылай пысăк пайĕ пулса тăрать.

Италирен илнĕ пуçламĕш хыпарсем тăрăх, çарсем антарас ĕç калама çук ăнăçлăн пырать. Нимĕçсен çыран хĕрринчи батарейисен хыçне сывлăшран пысăк десантсем антарнă. Пурĕ 14.000 парашютист ытла пăрахнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: союзниксен çар карапĕсемпе суднисем Францин кăнтăр çыранне татти-сыпписĕрех çарсем антараççĕ, унччен аннă çарсем малтанах йышăннă план тăрăх малалла куçса пыраççĕ. Çанталăк лайăх тăрать. Çавăнпа усă курса, Францин кăнтăр çыранĕнче йышăннă темиçе плацдарма аслăлатма подкреплениесем, хĕçпăшал тата тĕрлĕрен снаряжени хăвăрт килсе тăраççĕ.

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Францин Вăтаçĕр тинĕс хĕрринчи çыранĕсенче союзниксен çарĕсем тем сарлакĕш плацдармра çирĕпленсе ларнă ĕнтĕ. Вĕсен аллинче француз ривьерин анлă тăрăхĕ.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Америка транспорчĕсене Кăнтăр Францире Канн хулинче пушатаççĕ.

Союзниксем Канн хулипе Ницца хулине йышăннă

НЬЮ-ЙОРК, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Канн хулипе Ницца хулине союзниксем йышăнни çинчен пĕлтерет.

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерниче çапла каланă:

«Августăн 14-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем Фалез—Аржантан районĕнчи коридорăн икĕ енĕпе те малалла куçнă. Союзниксен Фалез патне çурçĕр енчен наступлени туса пыракан çарĕсем хăйсем тытса илмелли пĕррремĕш пунктсем патне часах пырса çитнĕ. Лезон шывĕ урлă каçса, вĕсем хуларан 6 километрта вăйлă çирĕпленсе ларнă. Коридорăн тепĕр енче союзниксен çарĕсем Леманпа Алансонран çурçĕрелле куçса пынă, Аржантан хули патне пырса тухнă. Тăшманăн Алансон çывăхĕнчи районра тăрса юлнă ушкăнĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Нормандире фронт михĕ евĕрлĕ пулса тăнă. Çав михĕ ăшĕнче союзниксен çарĕсем малалла кайнă. Лаз шывĕпе Орн шывĕ хушшинчи районра союзниксен çарĕсен малти отрячĕсем 4,5 километра яхăн малалла кайнă. Орн шывĕн улăхĕнче Тюри-Аркура тăшмантан тасатнă. Ытти чаçсем Гатемопа Теншебрэ хушшинчи çул тăрăх Вир хулинчен кăнтăралла наступлени туса пыраççĕ. Тăшман вĕсене вăйлах хирĕç тăмасть.

Мортэнран хĕвелтухăçнелле наступлени туса пыракан çарсем Жер хулине çитнĕ. Барантон районĕнчен миххĕн кăнтăр чиккипе пыракан пирĕн колоннăсем Доммфрон патне çывхарса пыраççĕ. Ран патне çитнĕ чаçсене тăшман вăйлăрах хирĕç тăма пуçланă.

Бретаньре Сен-Мало районĕнче çаплах çапăçаççĕ-ха. Унта лару-тăру улшăнман. Савăн пекех тата Динарта та çапăçаççĕ, унта союзниксен çарĕсем порт еннелле малалла кайнă. Брестпа Лориан районĕнче улшăнусем пулман.

Çанталăк лайăх тăнипе усă курса, союзниксен мĕнпур йышши самолечĕсен пысăк соединенийĕсем виççĕмĕш кун ĕнтĕ Нормандири михĕ районĕнче Германи çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Хĕвеланăç Германирен пуçласа Бордо хулине çитиччен аэродромсене, кĕперсене тата çулйĕрсене пыра-пыра тапăннă. Нимĕçсем вĕсене хирĕç тăман.

* * *

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Тăшман çарĕсем кĕрсе ӳкнĕ миххĕн çурçĕр енчи флангĕ тăрăх пирĕн чаçсем пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ. Тăшман, кунти вырăнсене минăсем лартса тата асăрхамасăр кĕрсе ӳкмелли вырăнсем туса, эпир малалла куçса пынине чарма хăтланать. Пирĕн çарсем Нуаро шывĕ урлă каçнă та Кондэ-сюр-Нуаро хулине çавăрса илнĕ. Теншебрэ хулине йышăннă. Çавăрса илнĕ тăшман çарĕсем кĕрсе ӳкнĕ миххĕн хĕвеланăç тата кăнтăр флангĕсенче те пирĕн çарсем наступлени туса пыраççĕ, вĕсем чылай малалла куçнă, Доммфрон, Жер, Ла Ферте-Масе хулисене ирĕке кăларнă. Пирĕн çарсем Теншебрэ хулинчен 3 миля кăнтăртарахра ларакан Иванд ятлă пункта кĕрсе кайнă. Кунтан хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем тăшман хытă хирĕç тăнине пăхмасăрах Ран хулинчен иртсе кайнă та çурçĕрелле куçса пыраççĕ. Ранран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата Алансон тавращĕнче пирĕн çурçĕрелле наступлени туса пыракан çарсем тăшманăн татса илнĕ чаçĕсене пĕтереççĕ.

Аржантан хулин пĕр пайĕ пирĕн çарсен аллинче тăрать. Ку районра тăшман хаяррăн хирĕç тăрать.

Бретаньре Сен-Мало крепоçĕ халĕ те тăшман аллинче-ха. Динар хулинче тăшман хирĕç тăни пĕтсе ларчĕ. Брест хулипе Лориан хулинче лару-тăру улшăнман.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем августăн 15-мĕшĕнче нимĕçсен Хĕвеланăç Германири, Бельгири тата Голландири авиаци базисем çине бомбăсем пăрахнă. Тăватă моторлă 1.900 бомбардировщик, истребительсен пысăк соединенисем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн 21 объектне атакăланă.

Пирĕн авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Çурçĕр Францири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Истребитель-бомбардировщиксем тата ракетăсем пăрахакан самолетсем Нормандири михе кĕрсе ӳкнĕ тăшман объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. 35 танка яхăн тата 350 автомашина ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

ФАЛЕЗ РАЙОНĔНЧИ НИМĔÇ ÇАРĔСЕН ЛАРУ-ТĂРĂВĔ ЙЫВĂРЛАННА

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Францире Англи, Америка тата Канада çарĕсем Фалез районĕнчи михĕ анине хĕссех пыраççĕ. Вĕсем çав михĕри нимĕçсен икĕ армине, унчченхи çапăçусенче лăскаласкерсене, пачах татса илсе пĕтерсе тăкассипе хăратаççĕ. 100.000 нимĕç ытла (вĕсен 1.200 танк тата 400 йывăр тупă пур) хăйсене аркатса тăкассинчен хăтăлма хăтланаççĕ.

Алансон хулипе усă курса тата сасартăк çурçĕрелле, çурçĕр енчен куçса пыракан Канада çарĕсем патнелле ыткăнса, американецсен хăватлă танковăй колоннисем Аржантан хули районĕнче çапăçаççĕ.

Августăн 15-мĕшĕнче пĕлтернĕ юлашки хыпарсенче çапла каланă: михĕрен тухмалли пĕртен-пĕр вырăнăн анлăшĕ 20 мильăран та иртмест. Америкăпа Канада çарĕсем пĕр-пĕрне хирĕç çывхарсах пыраççĕ, михĕ анине çыхса лартассипе хăратаççĕ. Çав вăхăтрах союзниксен ытти çарĕсем нимĕçсем Вир шывĕ патĕнче йышăнса тăракан участока пур енчен те хĕссе пыраççĕ. Кунти участокăн тăршшĕпе сарлакăшĕ 50-шар миля.

Михĕрен мĕнле те пулин çăлăнса тухма хăтланса, нимĕçсем хăйсен хыçĕнчен пулеметчиксенчен тăракан арьергардсем хăварса чакаççĕ. Паллах ĕнтĕ, ку арьергардсене вилсе пĕтме хăварни кăна.

РУЗВЕЛЬТ РАДИО ТĂРĂХ ТУХСА КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: президент Рузвельт эсминец çинче ларса пынă чухне радио тăрăх сăмах каланă, вăл хăй Гавай утравĕсемпе Алеут утравĕсем çине тата Аляскăна кайни çинчен сăмах тухса каланă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: тăшманăн Флоренци хулинче юлнă снайперĕсен активлăхĕ чаксах пырать. Фронтăн пур участокĕсенче те патрульсем çапăçаççĕ.

Союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем тăшманăн Печ хулинче (Югослави) пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене атакăланă. Авиацин ытти соединенийĕсем тăшманăн Кăнтăр Францири тата Çурçĕр Италири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра çапнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн фрончĕпе акăлчансен 8-мĕш армийĕн фронтĕнче лару-тăру улшăнман. Патрульсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем тăшманăн Кăнтăр Францири, Çурçĕр Италири, Югославири тата çапăçусен районĕнчи артиллери позицийĕсене пыра-пыра тапăннă. Иртнĕ каç Марсельри суднăсемпе порт сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕпе акăлчансен 8-мĕш армийĕн фрончĕсенче лару-тăру улшăнман.

Авиаци соединенийĕсем союзниксен çарĕсен десантне пулăшса тăнă, тăшманăн Кăнтăр Францири оборона сооруженийĕсемпе çулйĕрĕсене пыра-пыра тапăннă. Уйрăмах çыран хĕрринчи оборона сооруженийĕсене, тăшман çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсене, кĕперсене, аэродромсене тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă. Истребительсем союзниксен флотне шанчăклăн хӳтĕлесе тăнă, вĕсем çарсем антарнă район çинче хуралласа вĕçсе çӳренĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтернĕ: иртнĕ каç Англин сывлăш-çар вăйĕсен шутне кĕрекен «Москито» йышши самолетсен эскадрильи Берлина тапăннă.

ГЕРМАНИ АВИАБАЗИСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: ĕнер американецсен 1.500-тен пуçласа 2.000 таран бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем нимĕçсен Германири 7 авиаци базине, Бельгири 2 аэродромне тата Голландири пĕр аэродромне ăнăçлăн тапăннă.

Августăн 15-мĕшĕнче кăнтăр тĕлĕнче акăлчансен 1.100 бомбардировщикĕ ытла, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, нимĕçсен Голландири 5 аэродромне тата Бельгири 4 аэродромне питех те вăйлă тапăннă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИРИ ЗАВОДСЕНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: августăн 16-мĕшĕнче американецсен 1.000 йывăр бомбардировщикĕ ытла, истребительсен питех те пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынипе, Германири авиаци завочĕсене, авиа-мотор завочĕсене, синтетически горючи завочĕсене, нефть тасатакан заводсене тата аэродромсене ăнăçлăн тапăннă.

ПОЛЬШĂН НАЦИ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ЛЮБЛИН, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Польшăн наци совечĕ Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитетпа пĕрле лару туса ирттернĕ.

Ларăва Польшăн наци совечĕн председателĕ Берут уçнă. Вăл хăйĕн малтанхи сăмахĕнче СССР правительствине саламланă. Польша çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çара тата унăн Верховный Главнокомандующине Сталин Маршала Польшăн наци совечĕ ячĕпе чунтан-чĕререн тав туса салам яма сĕннĕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр çĕнтерĕвĕсем, тенĕ Берут, пире Польшăн вăхăтлăх столицинче—Люблин хулинче хамăр халăхшăн ирĕклĕ ĕçлеме май туса пачĕç, тенĕ. Берут сĕннине пурте пĕр кăмăллă пулса йышăннă.

Унтан Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитета вăрçă вăхăтĕнчи условисенче Польшăн ирĕке кăларнă территорийĕнче законсемпе декретсем кăларма ирĕк паракан закона çирĕплетнĕ. Çав законсене вара кайран Польшăн наци совечĕ çирĕплетмелле.

Польшăн наци совечĕ Польша комитечĕн малтанхи декречĕсене сӳтсе явса çирĕплетнĕ.

КОПЕНГАГЕН ХУЛИНЧИ ЗАБАСТОВКА

СТОКГОЛЬМ, августăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен радиовĕ пĕлтернĕ тăрăх, гестаповецсем 11 çынна вĕлернине хирĕç протестлесе, паян ирхине «Бурмейстер тата Вейн» фирмин суднăсем тăвакан верфĕнче ĕçлекен рабочисем тата Копенгаген хулинчи ытти нумай промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем забастовка пуçласа янă.

США-ра «ИСПАНИ ИРĔКЛĔХĔШĔН КĔРЕШЕКЕН КОМИТЕТ» ТУНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Паллă 100 деятеле яхăн, çав шутра писательсем, виçĕ епископ тата 21 священник, «Американецсен Испани ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен комитечĕ» тунă. Çав комитетăн тĕллевĕ — представительсен палатин членĕн Коффин конгреса тăратнă резолюцийĕшĕн тăрасси пулать. Çав резолюципе Коффи Франкопа çыхăнма пăрахма тата хĕçпăшала кивçен е арендăна памалли закон тăрăх Испанире вăрттăн ĕçлекенсене пулăшу пама ыйтать.

1944 ÇУЛТА ПĔТĔМ СОЮЗРИ АВИАЦИ КУННЕ УЯВЛАСА ИРТТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кăçал Пĕтĕм Союзри авиаци Кунне уявласа ирттерессине августăн 18-мĕшĕнчи эрнекунран августăн 20-мĕшĕнчи вырсарникуна куçарма йышăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00639 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 8, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.